25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ОКТЯБРЬ
9
ЭРНЕКУН
236 (6171) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче тата Моздок районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче пăлтă улшăнусем пулман.

* * *

Октябрĕн 6-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 5 танкне, войскăсемпе груэсем турттарса пыракан 60 автомашинине çити тата горючи тултарнă 5 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, артиллерин 17 батарейине пусарса лартнă, чугунçул çинчи икĕ состава çĕмĕрсе тăкнă, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче çаплах хаяр çапăçусем пынă. Противник танкĕсемпе пехотин пур атакисене те, ăна пысăк çухатусем кӳрсе, сирсе янă. Пирĕн чаçсем кивĕ позицисене тытса тăраççĕ. Кункаçа 800 гитлеровецa çити вĕлерсе тăкнă, нимĕçсен 19 танкне, 18 автомашинине, 5 орудине тата минометсен 6 батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре уйрăм участоксенче пирĕн войскăсем хăйсен позицисене лайăхлатасшăн çапăçнă. Лейтенант Ордиков командир пулса ертсе пыракан боецсем противникăн атакине сирсе янă. Гитлеровецсене çывăха ярса пирĕн боецсем пăшалпа тата пулеметпа персе нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна ытла вĕлерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем противник танкĕсен тата автоматчикĕсен 4 атакине сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсен 2 танкне, пĕр бронемашинине пĕтерсе тăкнă тата 100 гитлеровецa çити вĕлернĕ. Пирĕн боецсем 2 противотанковăй оруди, 10 пулемет, 5 миномет, 1 радиостанци тата ытти çар пурлăхĕ тытса илнĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем противникăн танкĕсемпе тата мотопехотипе хаяррăн çапăçнă. Пĕр участокра нимĕçсен 12 танкĕ Герман лейтенантăн подразделенийĕн тылне кĕрсе кайнă. Подразделени боецĕсем противотанковăй пăшалсемпе нимĕçсен 11 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем хаяр çапăçусем хыççăн оборонăн çĕнĕ рубежĕ çине чакнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре противник фронта тин çеç пырса çитнĕ румынсен пехотнăй дивизине çапăçăва кĕртсе янă. Икĕ кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн чаçсем çав дивизие самаях пысăк çухатусем кӳнĕ. Румынсен икĕ батальонне çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем 3 оруди, 8 пулемет тата винтовкăсем, минăсем, гранатăсем, патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем противникăн танксемпе авиаци пулăшса пынипе наступление кĕрсе кайнă икĕ полкĕн атакисене сирсе тăкнă. Кункаçа гитлеровецсен 4 атакине сирсе янă. Çав çапăçусенче противникăн 800 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе тăкнă тата нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Сталинграда хӳтĕлекенсем геройла çапăçса нимĕçсен дивизийĕсене хавшатаççĕ. Нимĕçсен 16-мĕш танковăй дивизийĕнчи 79-мĕш мотострелковăй полкран тыткăна лекнĕ салтаксем Герберт Фишер тата Георг Фихтер çапла каласа панă: «79-мĕш полк йывăр çухатусем тӳсрĕ. 3-мĕш рота пачах çук. Пысăк çухатусене пула, командовани çапăçăва дивизи штабĕн караульнăй взводне, тыл штабĕн охрана командине тата полевой жандармерин взводне кĕртсе ячĕ».

Пирĕн войскăсем нимĕçсен 76-мĕш пехотнăй дивизине аркатса тăкнă. Çав дивизирен тыткăна лекнĕ салтак çапла каласа панă: «203-мĕш полкра мĕнпурĕ те 30 çынран ытла юлман». 230-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак каласа панă тăрăх, çав полкри 7-мĕш ротăра 12 çын тăрса юлнă, 5-мĕш ротăра мĕнпурĕ те 5 салтак кăна юлнă.

Нимĕçсен 16-мĕш танковăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтаксем Ганс Граф, Лодени Вейцмер, Гельмут Лиш тата ыттисем те çапла каласа панă: «Пире строй умĕнче приказ вуласа пачĕç. Çав приказра çапла каланă: вырăссен танкĕсем наступлени пуçласа ярсан, пирĕн дивизин 64-мĕш мотострелковăй полкĕнчи 7-мĕш рота хăй йышăнса тăракан позицисене тытса тăма килĕшмен, вара командовани приказĕсĕрех каялла чакса кайнă. Приказ çакăн çинчен пĕлтерет: çав каялла чакса кайнă салтаксен пысăк пайне персе пăрахнă, ыттисене тĕрмене хупса лартмалла тунă».

* * *

Белофинсен тыткăнĕнчен тарса тухнă красноармеец Сергей Павлович Терентьев Питкаранта хула çывăхĕнчи лагерьте тыткăна лекнĕ совет çыннисем тӳсме çук йывăр асапланса пурăнни çинчен каласа кăтартнă. «Ку лагерьте,— тенĕ Терентьев,—аманнă красноармеецсене хупса усраççĕ. Вĕсене нимĕнле медицина пулăшăвĕ те памаççĕ. Пурне те кунне 14—16-шар сехет ĕçлеттереççĕ. Вĕсене плугсене кӳлсе çĕр сухалаттарчĕç. Талăкра пире пĕрер кружка çăнăх яшки паратчĕç. Финсен палачĕсем пире валли хăрушă асап шутласа кăларнă. Вĕсем тыткăна лекнĕ аманнă красноармеецсене йĕплĕ пралукпа чăркаса пăрахаççĕ те çĕртре сĕтĕрсе çӳреççĕ. Лагерьтен кашни кунах çапла асаплантарса вĕлернĕ совет боецĕсен виллисене турттарса каяççĕ».

Октябрĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Октябрĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче тата Моздок районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Сталинград районĕнче çаплах хаяр çапăçусем пынă. Нимĕçсен атакисене сирсе тăрса, пирĕн артиллеристсем тăшманăн пехотине пĕр батальона çити вĕлерсе тăкнă, нимĕçсен 5 танкне, 70 автомашинине çити тата боеприпассем тиенĕ 40 лавне пĕтерсе тăкнă, артиллерин 6 батарейине тата минометсен 10 батарейине пусарса лартнă. Гвардеец-минометчиксем противникăн войскисем çине вăйлăн пере-пере тăрса, 8 танка персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçĕн танкисчĕсем противник тăракан вырăна çĕмĕрсе кĕнĕ те нимĕçсен çĕре чавса лартнă 2 танкне, 8 орудине, боеприпассем тиенĕ 5 автомашинине, 3 пулеметнăй точкине пĕтерсе тăкнă тата 250 гитлеровецa вĕлернĕ. Тепĕр участокра нимĕç пехотин пĕр батальонĕ пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Гитлеровецсене пирĕн подразделенисем пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе кĕтсе илнĕ, гитлеровецсем вара каялла чакнă.

* * *

Моздок районĕнче Н-ски стрелковăй чаçĕн боецĕсем противникăн атакине сирсе тăрса, 15 автомашина тата гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Старши лейтенант Симонян орудие уçă позицие илсе тухнă та, унпа тӳл персе, тăшманăн танкне çĕмĕрнĕ. Снайпер Николаенко юлташ 16 гитлеровецa вĕлернĕ.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем пĕр паха высотана йышăнса илесшĕн çапăçнă. Çав çапăçусенче 3 станковăй пулемет, минометсен батарейине тата нимĕçсемпе румынсен 100 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем тата разведка тăвакан групăсем активлăн кĕрешсе икĕ кун хушшинче 300 гитлеровецa çити вĕлерсе тăкнă. 11 пулемет тата минометсен батарейине пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 12 дзочĕпе 5 блиндажне çĕмĕрнĕ. Старши сержант Репкин ертсе пыракан боецсен ушкăнĕ йĕплĕ пралук карнă вырăнтан иртсе противникăн траншейисене вăркăнса кĕнĕ те нимĕçсемпе штык вĕççĕн тăрса çапăçма пуçланă. Дорохов сержант 10 гитлеровецa ытла вĕлернĕ. Вуншар гитлеровецa пĕтерсе тăксан тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе ярсан, пирĕн боецсем хăйсен подразделенине таврăннă.

* * *

Нимĕçсен 251-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 471-мĕш полкăн 8-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Гюнтер Райшерт çапла каласа панă: «477-мĕш полкра вунă кун хушшинче пин çын ытла вилнĕ е аманнă. 8-мĕш ротăра çынсен йышĕн виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ стройран тухнă. Каялла чакнă чухне эпир йывăр пулеметсемпе ытти хĕçпăшалсене пăрахса хăвартăмăр. Вăрçă пуçланнăранпах фронтра тăракан салтаксем çапла калаççĕ: вырăссем халĕ пĕлтĕрхинчен нумай лайăхрах хĕçпăшалланнă, çапăçасса та вĕсем çав тери хаяррăн çапăçаççĕ. Нимĕç салтакĕсене вăрçă час пĕтет тесе темиçе хут та каланă ĕнтĕ. Ĕлĕк вĕсем çавна ĕненнĕ, анчах халĕ кашни çын хĕвелтухăçĕнчи фронтра тепĕр хут хĕл каçма тивнине курса тăрать. Хăшпĕр салтаксем çапла хăраса калаççĕ: вырăссен иккĕмĕш хĕлĕ пĕрремĕшĕнчен те ытларах çухатусем тӳстерĕ, вăл Германие аркатса тăкнипе вĕçленĕ, теççĕ».

Хĕрачасен трактор бригади— районри выставкăн кандидачĕ

Комсомольски районри машинно-тракторнăй станцинчи трактористкăсен бригади кăçалхи ялхуçалăхĕнчи ĕçсенче паха тĕслĕхсем кăтартрĕ. Бригада тракторпа тумалли çулталăкри ĕçсен плане 117 процент пурнăçларĕ, çунтармалли япаласене 1.300 килограмм перекетлесе хăварчĕ. Трактористка Л. Самарина юлташ СТЗ тракторпа кăçал пурĕ 560 гектар сухаланă, горючине 370 килограмм перекетленĕ. Бригада МТС-ăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать.

Районри ялхуçалăх выставкине хатĕрленсе трактористкăсем халĕ кĕрхи çĕртме тунă çĕрте тата авăн çапнă çĕрте пысăк вăйпа ĕçлеççĕ. Районри ялхуçалăх выставкине МТС хăйĕн чи лайăх ĕçлекен трактористкисемпе трактористчĕсене тата комбайнерĕсене ярать. Выставкăн кандидачĕсем пулма хăйсен паха ĕçĕсемпе пурĕ 9 комбайнер, 4 тракторист тата трактористкăсен бригади тивĕçлĕ пулчĕç.

Комбайнер Иштяков юлташ хăйĕн «Коммунар» комбайнĕпе кăçал 400 гектар тырра вырса пухнă, çулталăкри ĕç планне 200 процент пурнăçланă. Çак вăхăтра вăл 48 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Çавăн пекех Тихомиров юлташ та кăçал комбайнпа вырмалли ĕç планне 160 процент, Панков юлташ 150 процент, Трофимов юлташ 133 процент пурнăçланă.

Н. КОНДАКОВ.

Панă сăмаха пурнăçа кĕртрĕç

ЕТĔРНЕ. Алтай крайĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Октябрь уявне ялхуçалăхĕнчи ĕçсене ăнăçлăн вĕçленипе кĕтсе илме чĕнсе каланине Талуйри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăмăлласа йышăнчĕç. Вĕсем те, Алтай крайĕнчи патриоткăсем пекех, Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă куна Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшнипе тата ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене пĕтĕмĕшпех лайăх вĕçленипе кĕтсе илме пулчĕç.

Хăйсен сăмахне колхозниксем чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Кашни колхозникпе колхозница çак кунсенче ик-виçĕ хут лайăхрах та нумайрах ĕçлеме тăрăшать. Октябрĕн 5-мĕшĕнче колхоз авăн çапса пĕтерчĕ. Ултă лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăпа колхозницăсем авăна кунĕн-çĕрĕн çапрĕç. Талăкне 500 пăт тырă çапса кăларса пычĕç. Кĕлте ярса тăракан Евдокия Яковлева колхозница ĕçе тăрăшса туса пычĕ.

Колхоз государствăна тырă çак кунсенчех парса татать, клевер вăррине шĕкĕлчесе пуçтарнă, çĕрулмине кăларса пĕтернĕ.

И. ЛЬВОВ.

Ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур

ВĂРНАР. Районри нумай колхозсем, пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, лайăх ĕç тĕслĕхĕсем кăтартрĕç, ăмăртăва хутшăннă чухне панă сăмахсене ăнăçлăн пурнăçласа пырса, вĕсем тĕштырăсемпе техникăллă культурăсен тухăçне тата обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçне чылай ӳстерчĕç. Колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ те палăрмаллах ӳсрĕ.

«Победа», «Гигант» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янине пула уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕç. Иртеменкассинчи «Победа» колхоз тырпулсене пĕтĕмĕшпех çапса пĕтерне, государство умĕнчи парăмсене парса татнă. Пахча-çимĕçсемпе çĕрулмине пухса кĕртнĕ, кĕрхи çĕртме планне тултарнă. Кунта ĕçкунĕсен минимумне тултарман пĕр колхозник те çук.

Анчах пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлессишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва тивĕçлипе хутшăнман колхозсем те пур-ха. «Апнер» колхозри бригадăсенче колхозниксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлемеççĕ тата ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем те нумай. Çакăн пиркиех ĕнтĕ колхоз çуртыррисемпе техникăллă культурăсене питĕ кая юлса çулса пĕтернĕ, кĕлте кӳртес тата авăн çапас ĕç чăтма çук юлса пырать. Кунта ĕçе тĕрĕслес тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ. Правлени çуртыррисене вырса пĕтернĕ тесе лăпланса ларнă, çав вăхăтрах пĕр бригадăн çĕрĕ çинче 6 гектара яхăн сĕлĕ хирте тăкăнса ларнă.

«Пионер» колхозра та çак тĕслĕхсенех курма пулать. Унта машинăсемпе кирлĕ пек усă курмасăр, тырпула вырса илес ĕçе планпа пăхнинчен питĕ кая юлса пурнăçланă.

Икĕ колхозĕнче те ăмăрту хăмисене организацилемен, агитациллĕ-массăллă ĕçсене туса пыман, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăлараесси çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхман. Колхозсем халĕ те кĕлтесене кӳрсе пĕтермен.

«Память Ленина» колхоз, Çĕн Алтăшри «Волга» колхозпа ăмăртăва тухса, тырпула 19 ĕçкунĕ хушшинче пухса кĕртме, государствăна тырпул сентябрь уйăхĕнче пĕтĕмĕшпех парса татма обязательствăсем илнĕ. Анчах икĕ колхозĕнче те илнĕ обязательствăна тивĕçлипе пурнăçласа пырас тĕлĕшпе партипе комсомол организацийĕсем нимĕн те туман.

Выльăх-чĕрлĕхсем валли силос хывса хăварас, çулçăллă апатсем хатĕрлес тата акнă тымар-çимĕçсене çителĕклĕ таран хатĕрлесе хурас ĕçсене «Гигант», «Победа», Кольцовкăри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан, Катăшри Чкалов ячĕпе тăракан колхозсенче туса пĕтернĕ. Выльăх-чĕрлĕх фермисен витисене те пĕтĕмĕшпех хĕле хатĕрлесе çитернĕ. Анчах çак ĕçсене «Волга» тата «Память Ленина» колхозсенче начар туса пыра'

С. С.

Садсем ӳстерес ĕçе пăрахмалла мар

Иртнĕ виçĕ çул хушшинче хаяр сивĕ хĕлсем пулни садсене пысăк сиен кӳчĕ. Ватăрах улма йывăççисем пĕтĕмĕшпех шăнса хăрчĕç, çамрăк йывăççем те сиенленчĕç.

Нумаях пулмасть, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ хăйсен заседанинче садсене тирпейлес, йывăççене май килнĕ таран тӳрлетес тата колхозсенче садсене çĕнĕрен лартса ӳстерес ыйтăва сӳтсе-яврĕç. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ партипе совет организацийĕсене тата çĕрĕç органĕсенче ĕçлекен работниксене колхозсенче садсем ӳстерес ыйтăва çĕнĕрен сӳтсе-явма хушса хăварчĕç. Колхозсенче улма, груша, чей çырли, хăмла çырли йывăççисене çĕнĕрен лартса ӳстермелле, çакăнпа пĕрлех шăнса сиенленнĕ йывăççене ӳсме услови туса памалла.

Хăшпĕр специалистсем—пирĕн патăрта ĕнтĕ улма йывăççисем ӳсме пултараймаççĕ, çавăнпа уншăн тăрăшма та кирлĕ мар, теççĕ. Улма, çырла йывăççисем нумай çулсем хушши колхозсене пысăк тупăш панă, малашне те пирĕн колхозсенче садсем пулмалла. Садсене ӳстерессишĕн татах та тимлĕн ĕçлемелле. Улма, груша, çырласем пирĕн апатра тата пысăкрах вырăн йышăнса тăмалла.

Государствăн тата колхозсен питомникĕсем кăçал улмуççи хунавĕсене нумай лартса ӳстерчĕç. Çапла колхозсем те, колхозниксем те садсене çĕнĕрен лартса ӳстерме пултараççĕ тата ку ĕçе тăвасах пулать. Питомниксем улма йывăççин хунавĕсене мĕн чухлĕ кирлĕ таранах пама пултараççĕ. Хакĕ те хаклă мар, пĕр йывăççи 2 тенкĕ те 30 пус çеç тăрать.

Кунсăр пуçне, сивĕпе пăсăлнă улма йывăççисене çак çывăх çулсенчех тĕрлĕ майсемпе юсаса çимĕç памалла тума пулать. Паллах, йывăççем йăлтах хăрса ларнă пулсан, сада çĕнĕрен лартса ӳстерес пулать. Шăнса пăсăлнă йывăççем хунавланаççĕ пулсан, вĕсене ӳстерес пулать, хăрăк турачĕсене касса, хунавсене лайăх пăхса усрама тăрăшас пулать.

Садсене çĕнĕрен лартас ĕçе халĕ, кĕркунне, тăвас пулать. Колхозăн сачĕсенче, колхозниксен кил вырăнĕсенче улма, груша, чей çырли, хăмла çырли, хурлăхан йывăççисене кăçал нумай лартса хăварар.

Р. ОСАНОВ,
ЧАССР Наркомземĕн агрономĕ.

Республикăри колхозсенче авăн çапас тата кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсем октябрĕн 5-мĕш тĕлне мĕнле пулса пынине кăтартакан СВОДКА

Районсем	Авăн çапнă, комбайнпа вырнине шута илсе (процентпа)	Кĕрхи çĕртме тунă (процентпа)
Пăрачкав	77	14,7
Кувакино	74,3	10,2
Красноармейски	69,3	14,5
Канаш	69,2	45,8
Шăхасан	68,9	39,4
Ишлей	68,6	21,1
Шупашкар	68,3	32,4
Тăвай	64,8	35,4
Первомайски	64,5	20,5
Йĕпреç	64,1	17,9
Сĕнтĕр	63,9	34,1
Çĕмĕрле	62,2	23,5
Элĕк	62,0	25,3
Çĕрпӳ	61,6	31,1
Калинински	61,3	39,8
Комсомольски	60,6	27,0
Етĕрне	60,4	33,6
Вăрнар	60,3	33,8
Вăрмар	57,5	26,5
Хĕрлĕ Чутай	57,3	33,3
Чкаловски	56,6	19,2
Сĕнтĕрвăрри	55,7	31,5
Октябрьски	54,4	31,2
Улатăр	53,4	23,8
Куславкка	52,9	31,0
Шăмăршă	50,4	27,1
Советски	47,2	22,7
Елчĕк	42,8	23,1
Шупашкар хули	62,7	68,4
ЧАССР тăрăх	61,0	27,3
Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă	57,7	21,3

Натуроплата тыррине срокра татмалла

ШАХАСАН. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем государствăна тырă, пахча-çимĕçсем парса татрĕç. «Ударник», «Свобода», «Звезда», Сителти «Победа», Уманти «Победа» тата ытти колхозсем натуроплата тыррине парса татнă.

Анчах та çак вăхăтрах натуроплатăна хăшпĕр колхозсем халĕ те парса татман-ха. «Оборона», «Большевик», «Молодой колхозник» колхозсем натуроплата тӳлессине 30—38 процент çеç пурнăçланă.

Çак асăннă колхозсем ялхуçалăхĕн ытти ĕçĕсенче те кая юлса пыраççĕ. Колхоз председателĕсем колхозра ĕç вăйне тĕрĕс организацилемен, государство умĕнчи парăмсене пурнăçлас тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ.

В. ЯКОВЛЕВ.

Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем парар!

Пирĕн тăван çĕршыв йывăр та хăрушă кунсенче пурăнать. Темĕн чухлĕ пысăк çухатусем пулнине пăхмасăр, хăйсен салтакĕсен виллисем урлă каçса пырса, хăрушă тата юншăн çунакан ирсĕр тăшман пирĕн çĕршыв ăшне шалалла кĕме мĕнпур вăйпа тăрмашать. Фашистла тискер кайăк пырса кĕнĕ вырăнсенче пур çĕрте те унăн ирсĕрлĕхĕсен юнлă йĕрĕсем юлаççĕ: фашистсем хуласемпе ялсене çĕмĕрсе пĕтереççĕ, çунтарса яраççĕ, совет çыннисен пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçленипе тунă пуянлăхĕсене пĕтерсе тăкаççĕ.

Пирĕн хуласемпе ялсене аркатнăшăн, вăрă-хурахла çаратнăшăн, пирĕн çынсене асаплантарса вĕлернĕшĕн фашистла çынçиенсене хытă тавăрас шухăш-кăмăллă совет воинĕсем тăшмана хирĕç геройла кĕрешеççĕ. Паттăр Хĕрлĕ Çар вунулттăмĕш уйăх ĕнтĕ гитлерла Германипе ăна пăхăнса тăракан çĕршывсен çарĕсене хирĕç вăйлăн çапăçать. Кавказ сăрчĕсем патĕнче, Сталинград районĕнче хальхи вăхăтра вăрçăсен историнче нихăçан пулман хаяр çапăçусем пыраççĕ. Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем, командирĕсем тата политработникĕсем хăйсен юнне тата пурнăçĕсене шеллемесĕр пирĕн çĕрĕн кашни утăмĕшĕн, кашни çуртшăн çапăçаççĕ, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине нумай пĕтерсе тăкаççĕ.

Мĕнпур совет халăхĕ халĕ пĕр шухăшпа — урса кайнă тăшмана тытса чарас, ăна хăваласа ярас, аркатса тăкас шухăшпа пурăнать. Çакна пирĕн Хĕрлĕ Çарăн тумалла, тата вăл ăна тăватех. Анчах çĕнтерӳ хăй тĕллĕн килмест, ăна хаяр тата юнлă çапăçусенче çĕнсе илес пулать. Вăрçă вăрçма çăмăл мар. Вăрçăри йывăрлăхсем совет çĕршывĕн кашни çыннине пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлеме хушаççĕ. Хамăрăн тăван çĕршыва, чыслăха тата ирĕклĕхе сыхласа хăварас тесе, нимĕç помещикĕсемпе капиталисчĕсен пусмăрĕ айне лекес мар тесе, ирĕклĕхе юратакан совет халăхĕ пĕтĕм вăй-хала хурса тăшмана хирĕç кĕрешет.

Пирĕн фронтпа тыл пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ пулса тăраççĕ. Çакăнта пулса тăрать те ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар вăй-хăвачĕн çăлкуçĕ. Фронта мĕн кирлĕ, çавсене пурне те парса тăрас тĕлĕшпе тыл ĕçлет. «Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ тума!» — текен лозунгпа пирĕн пĕтĕм çĕршыв пурăнать.

Фронта куллен пулăшса пынисенчен пĕри — Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухас ĕç анлăн сарални пулса тăрать. Совет патриочĕсем тăван çĕршыва сыхлакансене лайăх тата ăшă тумлантарма тăрăшаççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕл çывхарать. Çак хĕлрен фашистла бандитсем халех ĕнтĕ хăраççĕ. Иккĕмĕш хĕлре гитлерла вăрă-хурахсем пирĕн çĕршывра хăйсене валли виле шăтăкĕсем тупмалла. Гитлерăн «эрзац-çăмачĕсем» фашистла тискер кайăксене хĕлри сивĕсенчен тата совет стрелокĕн пульлинчен çăлса хăвараймĕç. Çав бандитсем çине пирĕн халăх хытă тарăхса çитнĕ, вĕсене пур çĕрте те вилĕм кĕтет.

Совет воинĕсене пирĕн мĕнпур халăх юратать, вĕсемшĕн тăрăшать. Вĕсене лайăх тумлантарма, лайăх çитерме мĕн кирлĕ, çавсене пурне те халăх туса парать. Пирĕн воинсем нимĕç захватчикĕсене ним хĕрхенмесĕр пĕтерсе пыраççĕ.

Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем хатĕрлесе парассишĕн тăрăшса, малта пыракан колхозсен членĕсем ăшă тумтирсем — кĕрĕк пиншаксем, çăматăсем, çăм носкисемпе чăлхасем, алшишсем, ăшă алсасем, ăшă кĕпе-йĕм, пир тăласем тата ытти япаласем те сахал мар пачĕç. Елчĕк районĕнче кăçалхи августпа сентябрь уйăхĕсенче кăна сурăх тирĕсене пĕр пин ытла, çăм 211 килограмм пухса, çавсене ăшă тумтирсем хатĕрлеме панă. Вĕсемсĕр пуçне 55 кĕрĕк пиншак, 69 мăшăр çăматă, 115 мулаххай, 92 мăшăр носки, 160 мăшăр чăлха тата ытти те пухнă. Ленин ячĕпе тăракан колхозăн членĕсем кăна сурăх тирĕсем 100 ытла тата ытти япаласем те панă. Шăхасан районĕнчи «Березовка» колхозăн колхозникĕсемпе колхозницисем пĕр кĕрĕк пиншак, 45 сурăх тирĕ, 7 мăшăр çăматă, 3 мулаххай тата ытти япаласем те панă. Çав районри «Большевик» тата Ильич ячĕпе тăракан колхозсен членĕсем те совет воинĕсене валли ăшă тумтирсем туса парас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Вăрмар районĕнче август уйăхĕнчен пĕтĕмпе 71 кĕрĕк пиншак, 53 мăшăр çăматă, 64 мăшăр алса, 165 мăшăр çăм алшиш, 167 мăшăр çăм носки тата ытти япаласем те пухăннă.

Районсен тата колхозсен руководителĕсем Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухни государствăн пысăк ĕçĕ пулса тăнине тĕрĕс хак панă çĕрте çак ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Çавăн пек районсемпе колхозсенчи ĕççыннисем нумайĕшĕ ăшă тумтирсем хатĕрлеме сурăх тирĕсем, çăм тата çĕлесе хатĕрленĕ япаласем те сахал мар параççĕ.

Ăшă тумтирсем пухас ĕç — государствăн пысăк ĕçĕ пулнине пур çĕрте те мар ăнланса илнĕ-ха. Ăшă тумтирсем пухас ĕç августпа сентябрь уйăхĕсенче Ишлей районĕнче çавтери начар пулса пынă. Икĕ уйăх хушшинче те унта 99 сурăх тирĕ, 43 килограмм çăм, 110 мулаххай тата ытти вакă япаласем кăна пухăннă. Районри партипе совет организацийĕсем çак ĕçе ертсе пыман. Çак ыйтупа массăсем хушшинче ăнлантару ĕçне организацилемен. Мĕнпур ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шаннă. Юлашки кунсенче тин Ишлей районĕнче ăшă тумтирсем пухассипе ĕçлеме тытăнчĕç.

Советски, Сĕнтĕр, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсенче те ăшă тумтирсем пухас ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха.

Фронт интересĕсем ăшă тумтирсем пухас ĕçе пур çĕртре те лайăх организацилеме, çак ĕçре малта пыракансенчен пример илме хушаççĕ. Ăшă тумтирсем пухас ĕç ăнăçлăн пулса пырасси çак ĕçе партипе советсен активĕ, партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем ытларах хутшăннинчен килет. Коммунистсемпе комсомолецсем тата партире тăман большевиксем çак питех те кирлĕ ĕçрен аякра тăма пултараймаççĕ. Вĕсен çак ĕçре ытти халăха пример кăтартмалла, халăх хушшинче политикăллă ĕçе анлăн туса пырас пулать. Ним иккĕленмелли те çук, комиссисем организациллĕ ĕçсене лайăх туса пырсан, партипе комсомол организацийĕсем ăнлантару ĕçне анлăн сарсан, Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухас ĕç пур çĕрте те пысăк ăнăçлăхпа пулса пырĕ.

ВКП(б) райкомĕсен ăшă тумтирсем пухас ĕçе куллен ертсе пырас пулать, çак ĕç хăйне хăех пулса пырасси çине шанма юрамасть. Районсенчи тата хуласенчи организацисем халиччен çăм носкисем, чăлхасем, алшишсем тата ăшă кĕпе-йĕм пухасси çине сахал çавăрănса пăхнă. Вăхăт кĕтмест, çав япаласем боецсене паян-ыранах кирлĕ пулаççĕ. Çавăнпа та вĕсене хăвăртрах пухмалла, боецсем патне яма тивĕçлĕ складсене леççе парас пулать. Тирсене тутарса кĕрĕк пиншаксемпе алсасем çĕлетес, çăматăсем йăвалаттарас, алшишсемпе носкисем çыхтарас ĕçсене те хăвăрт туса çитермелле. Çак ĕçсене тума халăха нумайрах хутшăнтарни кирлĕ. Хуласемпе ялсенчи хĕрарăмсем, хĕрсем, комсомолкăсем кĕрĕк пиншаксем çĕлеме, алшишсемпе чăлхасем çыхма, фуфайкăсем çĕлеме пултараççĕ. Шупашкарта килхуçи хĕрарăмĕсем совет воинĕсене валли чăлхасемпе перчаткăсем çыхма тытăннă. Çак пример тăрăх ытти хуласемпе ялсенчи хĕрарăмсене те ăшă тумтирсемпе япаласем хатĕрлес ĕçе хутшăнтармалла.

Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пани вăл совет воинĕсемшĕн тăрăшни, нимĕç оккупанчĕсене аркатса тăкма фронта пулăшни пулса тăрать.

Йăлтах — фронт валли, йăлтах — тăшмана аркатса тăкма!

Т. А. АХАЗОВ,
ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ.

Пирĕн земляксем

Антоновсен мухтавлă çемьи

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): гвардин 2-мĕш рангри техник-интенданчĕ **А. А. Антонов**, военинженер **И. А. Антонов**, капитан **Н. А. Антонов**.

Кĕтмен çĕртен хула çинче нимĕç çăханĕсем явăнма пуçланă. Мирлĕ пурнăçпа пурăнакан илемлĕ урамсем çине бомбăсем ÿксе тискеррĕн арканнă. Командовани тăшмана хирĕç тăма приказ парсанах, 2-мĕш рангри техник-интендант А. Антонов юнлă гитлеровецсене хирĕç хаяр атакăна кĕнĕ. Çапăçусем хула урамĕнче тата хулан çурçĕр енчи стенисен хыçĕнче пулса пынă. Тăшман, хăй çавтери нумай юн тăкнине тата çухатусем тунине пăхмасăрах, Хĕрлĕ Çар воинĕсен штыкĕсем çине тирĕне-тирĕне, малаллах сĕмсĕрленнĕ. Танмар кĕрешÿре юлташсенчен хăшĕ-пĕри вилнĕ. Вĕсем вилĕме хирĕç куçа кĕретĕн тăрса, тăшмана хирĕç арăслансем пек çапăçса, тăван çĕр çине ÿкнĕ. Сулахай флангра, хулан Ленин ячĕпе хисепленекен урамĕн аслă хапхи умĕнче вунтăватă боец çеç юлнă. Отделени командирĕ ÿкнĕ, вара Александр Антонов, гранатăсен çыххине тытнă та, пурне те илтĕнмелле команда панă.

— Пĕр шит те чакмалла мар! Хыçра — çĕршыв, умра — тăшман. Кам мĕнле пĕлет, çапла сыхлăр çĕршыва!

Вунвиçĕ паттăр красноармеец Ж хулишĕн танксен пĕр подразделенине хирĕç виçĕ сехет хушши, çĕнĕрен пулăшу пыричченех çапăçнă. Александр Антонов çĕнĕ приказани илнĕ: «Çĕнĕрен приказ пуличчен рубежа тытса тăмалла».

— Есть! Рубеж пирĕнтех пулĕ! — хăюллăн ответленĕ Антонов штаба. Хуларан мирлĕ çыннисене эвакуациленĕ, тăшмана хирĕç тăма çĕнĕрен вăйсене хатĕрлесе тăратнă.

Тăшман темĕн чухлĕ сĕмсĕрленсен те, Александр Антоновăн взвочĕ Ленин урамне кĕмелли рубежа паман. Вăй чакса çитнĕ. Гранатăсем те пĕтнĕ, пулемета та тăшман аркатнă. Сылтăмран та, сулахайран та тăшман çĕмĕрсе кĕнĕ. Анчах Антонов хăраса ÿксе тăнне çухатман. Пирĕннисем çаплах хирĕç тăнине кура, противникăн юлашки танкĕ чăнкă çыр умĕнче чарăнса ларнă. Ку ĕнтĕ хыçран килекен танксене хăпарса каймалли «кĕпер» пулнине Антонов лайăх асăрханă. Противник танкĕнчен иккĕн тухнă, вĕсем «кĕпертен» аяккарах пăрăнса вилĕмрен сыхланнă. Шухăшласа тăма вăхăт мар! Антонов хăвăрт çыр тĕпне сикнĕ, танк водителĕн кабинине кĕнĕ, кĕçех «кĕпер» кĕрлесе хускалса кайнă. Вăл канав хĕррипе çавăрăнса хамăрăннисем енне çул тытнă. Тăшман авиацийĕ, те пĕлсе, те пĕлмесĕр, вĕçĕмсĕр бомбăсем пăрахнă. Анчах хăюллă совет воинĕ вут-çулăм витĕр каллех хăйсен батальонне тухнă, каллех тăшмана хирĕç вăр[illegible]

* * *

Шап çак вăхăтра репродуктор умĕнче В. М. Молотов юлташăн сăмахне итлесе пĕтернĕ те, студент Николай Антонов Шупашкар военкомĕ патне хăйне халех фронта яма ыйтса заявлени çырнă. Военком умĕнче тепĕр сур сехетрен пединститут студенчĕ Николай Антонов тăнă:

— Çук, вĕренме пурпĕрех тавăрнатпăр-ха. Сывă пулăр!

Çакăнтан пуçланса кайнă вара Николай Антоновăн фронтри пурнăçĕ. Институтра вĕреннĕ чухне вăл вĕçев ĕçне хатĕрленнĕ, хăйне летчик пулма хатĕрлесе пынă. Вырăна çитсен Н. Антонова танкистсен шкулне илнĕ. Унтан вĕренсе тухсан, мотор ĕçне аван пĕлекен, вĕренÿре часах палăрнă боеца фронта янă. Фронт хăюллисемпе паттăррисемшĕн хăрушă вăхăтсенче те хăрушă пулман, мĕншĕн тесен совет брони вăл тăшмана парăнманнине танкистсем лайăх пĕлсе тăнă. Çапăçусенче палла тухнă танкиста кĕçех штаб начальникĕ туса хунă. Н. Антонов, вунтăхăр çулхи комсомолец, штабра ĕçленĕ чухне те организациллĕ талантне кăтартнă. Вăхăт атакăсемпе тытăçусенче иртсе пынă. Тăшман çухату хыççăн çухату тÿснĕ. 1941 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнче Сталин юлташ Мускава хÿтĕлес тĕлĕшпе панă приказа боецсем хĕрÿ тытăçу хыççăн илнĕ. Ку питех те хумхантарнă. Шăп çав вăхăтра Н. Антонова çĕнĕ секретлă приказ çитерсе панă. Шăп Мускавран 110—115 километрти Н. станцине каймалла та Н-ски батальона хăй аллине илмелле пулнă. Акă вăл, икĕ кун иртсен, батальон командирĕ пулса тăнă. Каллех çĕнĕ çапăçусем, атака, танмар кĕрешÿсем, каллех çĕнтерÿ. Виçĕ уйăх хушши пĕр татăксăр тăшман атакисене сире-сире тăнă. Гитлер Мускавра «чей ĕçесси» теп пулнă. Ку вăхăтри кĕрешÿсем çинчен Н. Антонов хăйĕн тăван ашшĕ патне янă çырура шÿтлĕн çапла çырать: «Ну-и кÿпкетпĕр нимĕçсене, атте. Тĕлĕкре те вĕсем эпир çапла çапассине тĕлленмен пулĕ. Гитлер Мускавра парад иртересси пĕтрĕ ĕнтĕ, пăкки шанчĕ».

Шартлама хĕл кунĕсенче Хĕвеланăç фронтĕнчи Н. Антонов ертсе пыракан батальон темиçе хутчен атакăсенче пулса чапа тухнă, гитлеровецсем вĕсенчен темрен хăранă пекех хăранă. Çав атакăсенче батальон командирĕ Н. Антонов виçĕ хутчен сăмăллăн аманнă, анчах позицинчен тухман.

Пĕррехинче батальон М. ялĕшĕн пыракан кĕрешÿре тăшманăн нумай йышлăрах çарне хирĕç тăнă. Командовани каялла чакма приказ панă. Н. Антонов вăл приказа итлемен, хăй чи малти ретре пулнă. Приказ иккĕмĕш хут пынă. «Чакмалла, — чакма пурте пултаратпăр, айтăр-ха атакăна кĕрсе çĕнтерер!» — тенĕ Н. Антонов. Ял çуннă. Тăшман çине çĕмĕрсе кĕрес пулсан, çулăм витĕр тухмалла пулнă. Боецсем çухалса кайман. Пĕр енчен питĕ нумайăн персе тăнă пек туса, Н. Антоновпа тутар халăхĕн ывăлĕ Рахмадулл, пĕр çĕртен тепĕр çĕре пулемета йăтса чупса, тăшман çине персе тăнă, çав вăхăтра батальонăн тĕп вăйĕ М. ялĕн тепĕр енĕпе вăрттăн тухса тăшмана çавăрса илнĕ те, 527 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Анчах Н. Антоновпа Рахмадулл çине нимĕçсен бандичĕсем сисмен çĕртен сиксе тухнă. Вĕсем совет патриочĕсене чĕрĕллех тытса илме ĕмĕтленнĕ. Батальон командирĕ Н. Антонов противника çывăхах çитерни те, пĕр самантрах пулеметран персе çулса тăкнă. С[illegible]лăшра каллех нимĕç çăханĕ явăнса хăпарнă. Вăл çĕр çуммипех вĕçе-вĕçе паттăр воинсене шыранă. Çăхан аяккалла вĕçнипе усă курса вĕсем иккĕнех хамăрăннисем патне шăваннă. Самолет каллех пырса тухнă та инçех те мар бомба пăрахнă. Батальон командирĕ аманнă. Анчах кунтах юлма май килмен, Рахмадулл та çухалнă. Н. Антонова кĕçех санитарсем госпитале илсе тухнă. Пĕр уйăхран — каллех фронта, каллех тытăçусенче. Хальхипе ăна капитан званине панă. Пĕррехинче ăна тăшман тытса илнĕ чи кирлĕ рубежа илме хушнă. Вара тăватă кун хушши пĕр татăксăр çапăçса, рубежа илнĕ, анчах ăна тытса тăма питех те хĕн пулса çитнĕ: нимĕçсен çĕнĕ вăйĕсем пырса тухнă, пирĕннисене рубеж çывăхне пыма фашистсен авиацийĕ çул паман. Вăтăр сакăр паттăр воин виçĕ кун хушши рубежа нимĕçсен пĕр дивизийĕнчен хăтарса тăнă. Çав кунсем хушшинче 1000 ытла гитлерла офицерсемпе салтаксене пĕтерсе тăкнă. Капитан Н. Антонов аманнă. Халĕ вăл тылри пĕр госпитальре сывалать. Правительство ăна Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăланă. «Юратнă атте-анне. Маншăн ан кулянăр. Эпĕ кĕçех строя тăрăп. Хĕпĕртĕр, сирĕн ывăлусем начар мар çапăçаççĕ», — тесе çырать вăл хăйĕн çырăвĕнче.

* * *

Вăрнар районĕнчи «Апнер» колхоз колхозникĕсем чăннипех мухтанаççĕ хăйсен земляксемпе. Антон Тихоновăн вăталăх ывăлĕ те фронтăн чи ответлă участокĕнче. Вăл Йошкар-Олари вăрман промышленноçĕн институтне вĕренсе тухсанах çар инженерĕ пулса фронта кайнă. Гитлерла юнĕçенсене хирĕç тăван çĕршывшăн, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн сакăр уйăх хушши вăл вилĕмрен хăрамасăр, чи малти позицисенче кĕрешет.

Виçĕ паттăр ывăла ÿстернĕ Антон Тихонов, «Апнер» колхозри бригадир, хăйĕн ывăлĕсемпе тивĕçлипе мухтанать.

Çак кунсенче виçĕ тăвантан пĕри — Александр Антонов юнлă гитлеровецсене хирĕç паттăррăн çапăçса чаплă вилĕмпе вилнĕ. Пĕччен икĕ кун хушши штаб çине тапăннă гитлеровецсене хирĕç çапăçса, вăл штаба çĕнĕ подразделени çитиччен тытса тăнă. Штаба ултă фриц çеç, чĕррĕн юлса, тытса илнĕ, анчах вĕсем те совет воинĕсен аллине лекнĕ. Паттăр воина, гвардин 2-мĕш рангри техникне Александр Антонова хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Правительство наградине пама тăратнă.

— Вăл вилчĕ. Анчах унăн вилĕмĕшĕн кĕçĕннисем тавăрĕç, — тет Антон Тихонов.

Вăрнар районĕнчи ĕççыннисем виçĕ паттăр тăванăн мухтавлă ĕçĕсемпе чĕререн савăнаççĕ.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

МАЙКОП ПАРТИЗАНĔСЕМ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Майкоп районне йышăнса илсен, нимĕçсем çавăнтах нефть промыслисем патнелле васканă. Анчах та гитлеровецсем Майкоп нефчĕ çине шанни вырăнлă пулман. Çав промыслăсен вырăнĕнче вĕсем пĕр ишĕлчĕксем çеç курнă. Нефть тухакан çурăксене тултарса лартнă, нефтепровода пăснă. Çак ĕçсемпе пуçланă ĕнтĕ Майкоп партизанĕсем хăйсен кĕрешĕвне. Вĕсем тăшмана нефть паман.

Фашистсем нефть промыслисенче ĕçленĕ рабочисемпе специалистсене пуçтарма хăтланнă. Анчах та вăл çынсем хулара тупăнман. Вара нимĕçсем мирлĕ çынсене арестлеме тытăннă. Гестаповецсем темиçе совет гражданне, çав шутрах 2 врача, çакса вĕлернĕ.

Гитлеровецсем мĕнпур магазинсемпе складсене çаратса тухнă та хваттерсем тăрăх çÿреме кайнă, кăмăла кайнă япаласене пурне те турта-турта илнĕ.

Майкоп вилĕ хула пулса [illegible]. Çынсем фашистла пуçкасакансен куçĕ умне пулмасăр пурăнма тăрăшнă. Пурнăç вăрмансемпе тусем хушшине куçнă, унта партизансен темиçе отрячĕ кĕрешет. Фашистсем Майкоп нефтяникĕсене пĕр усăсăр шыранă. Вĕсем— вăрмансемпе тусем хушшинче.

Партизансен отрячĕ вăрман çулĕсем çинче кĕске вăхăт хушшинчех 100 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă тата Хĕрлĕ Çарăн яланхи часĕсемпе пĕрле темиçе операцире пулнă.

Çав отрядри партизан Константин, моряк пулнăскер, уйрăмах палăрнă. Ту çулĕ çинче, çÿлĕ йывăçсем хушшинче темиçе партизан засада тунă. Часах юланутлă нимĕç салтакĕ курăнса кайнă. Вăл çывăхарса çитсен, Константин сасартăк тĕмсем хыçĕнчен сиксе тухнă та нимĕçе персе вĕлернĕ. Партизан çав вилнĕ нимĕçĕн документсем хунă сумккине хывса илес тесе пĕшкĕннĕ кăна — çул çавăрăнăçĕнче нимĕç автомашини курăнса кайнă. Пырса çитнĕ нимĕçсем партизанпа тĕл пуласса кĕтмен.

— Мĕн пулчĕ?—тесе ыйтнă вĕсенчен пĕри нимĕçле.

Партизан вырăнне унăн автоматĕ ответ панă. Автоматпа пĕр черет персе ярса, партизан машинăра ларакансене пурне те шăтарса тухнă. Машина çинчи офицерсем, вăл шутра пĕр подполковник, вилнĕ. Партизансем штабăн паха документсене тытса илнĕ.

Тепĕр отрядри партизансем нефть кăларакан районри пĕр яла вырнаçнă нимĕç гарнизонне чăрсăррăн тапăннă. Гитлеровецсем унта ĕçкĕ тума шут тытнă. Çĕрле, чылай ĕçсе ÿсĕрĕлсен, офицерсем хăйсем ĕçсе ларнă шкула ялти хĕрсене илсе пыма хушнă. Салтаксем çав хĕрсене илме тухса кайсан, чÿречерен витĕр шкула партизансен гранатисем вăркăннă. Часах совет автомачĕсем шатăртатма тытăннă, винтовкăсем шалтлатнă. Вуншар гитлеровеца вĕлерсен, партизансем пĕр çухатусăрах вăрмана кайса пытаннă.

Нимĕçсем нефть промыслисене хута ямашкăн Майкоп нефтяникĕсене тупас çук, анчах та партизансем-нефтяниксем вара оккупантсене кашни кунах тупаççĕ, вĕсем оккупантсене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пыраççĕ.

Ют çĕршывсенче

Сталин юлташ Америка корреспонденчĕн ыйтăвĕсем çине панă ответсем çинчен Англипе Америка хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Англи хаçачĕсем И. В. Сталин юлташ Америкăри Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕн ыйтăвĕсем çине панă ответсене анлăн пичетлеççĕ. «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат çав ответсене пĕрремĕш страницăра пичетлесе кăларнă, вĕсене çакăн пек ятпа пичетленĕ: «Сталин союзниксенчен туллин тата вăхăтра пулăшма ыйтать. Иккĕмĕш фронт чи пысăк вырăн йышăнса тăрать». «Ньюс кроникл» хаçатра И. В. Сталин юлташăн отвечĕсене çакăн пек ят парса пичетленĕ: «Сталин иккĕмĕш фронт чи пысăк вырăн йышăнса тăрать, тет». «Дейли экспресс» хаçат вĕсене çакăн пек ятпа пичетленĕ: «Сталин союзниксем паракан пулăшăва тишкерет. Пĕр япала çеç кирлĕ: хăвăр обязательствăсене пĕтĕмĕшпех тата вăхăтра пурнăçлăр. Халиччен вăл пулăшу çителĕксĕр пулнă». «Таймс» хаçатра Сталин юлташăн отвечĕсене Российăн йывăрлăхĕсене çăмăллатмалла» тесе ят парса пичетленĕ.

Британин радио саракан компанийĕ Сталин юлташ Америкăри Ассошиэйтед пресс агентствин ыйтăвĕсем çине панă ответсене пĕтĕмĕшпех радиопа вуласа панă. Вăл ответсене Англин информаци министерствин пĕлтерĕвĕнче те пичетленĕ.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Америка хаçачĕсем И. В. Сталин юлташ Америкăри Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕн ыйтăвĕсем çине панă ответсене пĕрремĕш страницăра пичетленĕ. Вăл ответсене тата Америкăри чи пысăк агентствăсемпе радиокомпанисем те сарнă. Америкăри паллă журналистка Доротти Томпсон çав ответсем çинчен радиопа çапла каланă: «Совет Союзĕ коалициллĕ вăрçăн пахалăхне ăнланать. Англипе Совет Союзĕн тата Америкăн çирĕп союзĕ вăрçăра часах çĕнтерме пулăшма пултарать. Совет Союзĕ коалициллĕ вăрçă тума чунтан-чĕререн тăрăшать, вăл союзниксенчен хăйсен обязательствисене пĕтĕмĕшпех тата вăхăтра пурнăçа кĕртме ыйтать», тет.

И. В. Сталин юлташăн Америка корреспондентне панă отвечĕсем пирки общинăсен палатинче панă ыйтусем

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатинче Черчилле çакăн пек ыйту панă: Сталин Америка корреспонденчĕ иккĕмĕш фронт кирли çинчен ыйтнине хирĕç панă ответсем пирки правительство мĕнле те пулин заявлени тăвĕ-и?—тенĕ. Черчилль çапла каланă: «Пире çакă питех те паллă: хальхи вăхăтра Англи правительстви халиччен тунă заявленисемсĕр пуçне урăх нимĕнле заявлени те тума кирлĕ мар», тенĕ. Черчилль малалла хăй çав асăннă заявление вулани çинчен, тĕпчесе вĕренни çинчен каланă. Лейборист Бивен çапла ыйтнă: «Рабочисем Сталинăн заявленийĕ калакан япала çинчен пĕтĕм Английĕпе сÿтсе-явни факт мар-и вара вăл? Общинăсен палати çав заявление пăхса тухма май килнипе усă курмĕ-ши вара? Премьер-министр çакна ăнланса илет-и: Совет Союзĕпе пирĕн хушăра каласса татăлман ыйту пур пуль тесе ытларах та ытларах шухăшла пуçласан, вăл пирĕн çар промышленноçне хытă пырса тивме пултарать вĕт?»—тенĕ. Черчилль çапла ответленĕ: «Эпĕ заявлени турăм ĕнтĕ», тенĕ.

Çар министрĕ пулнă Оливер Стэнли çапла каланă: «Англин йышлă массисем çакна питĕ лайăх пĕлсе тăраççĕ: Черчилль çинчен кирек мĕн шухăшласан та, ăна тĕнчери ытти çынсенчен сахалтарах хистемелле пулать», тенĕ. Лейборист Белленджер çапла каланă: «Сталинăн заявленийĕ тăрăх çапла шухăшлама пулать: штабсен ĕçне политикăллă тĕллевсем хушнă пек килĕштерсе пырас ĕçре çирĕп туслăх çук, премьер-министрăн Мускавран тавăрăннă хыççăн каланă сăмахĕ пире урăхла шухăшлаттарнăччĕ. Премьер-министр халĕ Англипе Российăн штабĕсен ĕçĕсем пирки йăлтах каласса татăлнă тесе шантарса калама пултарать-и?» тенĕ. Черчилль çапла каланă: «Çак ыйту пирки пур енчен те виççе пăхса каланă заявлени çумне манăн хальхи вăхăтра нимĕн хушса каламалли те çук, эпĕ общинăсен палатине çак питĕ паллă пулса тăракан тапхăрта çавăн пек ыйтусем çине ответ илме ан тăрăштăр тесе çине тăрса калатăп», тенĕ.

Либерал Дэвис çакна кăтартса панă: Сталинăн çав заявленине пичетлесе кăларнă хыççăн пур çĕрте те, вăл шутра Америкăра та, дискуссисем сике-сике тухаççĕ. Сталинăн уççăн каланă сăмахĕ çĕнĕлле шухăшлама панă май палатăра прени уçасси çинчен Черчиллĕн сÿтсе-явмалла»,—тенĕ. Черчилль çапла каланă: «Эпĕ общинăсен палатинчен правительствăна хăй йышăннă позици çинчех тăма пулăшма ыйтатăп», тенĕ. Лейборист Маклин—Черчилль çак ыйтăва рабочисем мĕн тери хĕрÿллĕн сÿтсе-явнине ăнланса илеймест, тесе кăтартса, правительствăна çав ыйтупа тухса калама хисте пуçласан, Синклер ĕçе хутшăннă та малалла урăх ыйтусем пама чарнă.

И. В. Сталин юлташăн „Ассошиэйтед пресс“ корреспондентне панă отвечĕсем çинчен Уэллес калани

ВАШИНГТОН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Пичет представителĕсем Сталин юлташăн Кэссиди корреспондента панă отвечĕсем çинчен ыйтнине хирĕç Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государственнăй секретарĕн заместителĕ Уэллес çапла каланă: эпĕ Сталинăн çырăвне питĕ тăнласа вуларăм. Темиçе хут та каласа пĕлтернĕ политика çинчен тепĕр хут каласа пама кирлĕ мар, вăл политика çакăн пек: Америка правительстви совет çарне мĕнле майпа пулăшу пама пур—материалпа-и, е вăй ярса парса-и—çав майсемпе пуринпе те пулăшса тăрасшăн, США этем пултарнă таран питĕ пысăк пулăшу парса тăрать, тенĕ. Америкăн çавăн пек пулăшăва питĕ пысăккăн парса тăрас политикине Уэллес тепĕр хут çирĕплетсе панă. Çар ыйтăвĕсене тата хĕçпăшала кивçен е аренда шучĕпе памалли законпа çыхăнса тăракан ыйтусене çавăн пек ыйтусене татса паракан правительство учрежденийĕсен сÿтсе-явмалла, тенĕ.

Уилки ТАСС корреспондентне калани

ЧУНЦИН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Уилки ТАСС корреспондентне çакăн пек заявлени панă: «Эпĕ мистер Сталинăн заявленийĕ пĕрлешнĕ çĕршывсен халăхĕсене Российăн халех саплămalli нушисем çинчен тата хытăрах шухăшлаттарĕ тесе шанатăп. Эпĕ иртнĕ эрнере Мускавра хамăн шухăшсем çинчен каласа пани те çав тĕллевпех пулнăччĕ».

Франци çĕнĕ выçлăх кÿрекен хĕл умĕнче тăрать

ЛОНДОН, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Францире продовольстви ĕçĕ вăрçă пуçланнăранпа тăваттăмĕш хĕле кĕрес умĕн татах та начарланнă, ку ĕнтĕ кăçал çанталăк уяр тăнинчен тата Германие продовольстви ытларах тăратнинчен килет.

Кăçалхи тырă 50 миллион квинтала яхăн пуçтарăнать пулмалла. Унăн чылай пысăк пайне нимĕçсем турттарса каяççĕ. Вăрçă пуçланачченех Франция çулталăкне 80 миллион квинтал тулă пĕтернĕ.

Çу туса хатĕрлесси выльăх-чĕрлĕхсем начарланнине пула питĕ нумай чакнă. Çĕр майăрĕнчен туса хатĕрленĕ çу запасĕ 63 пин тоннăна çитет, анчах вăрçă пуçланаччен вăтам запас 400 пин тонна таран пулнă. Халăха хальхи пек çити-çитми çеç парса тăрас пулсан та, 44 пин тонна выльăх-чĕрлĕх çăвĕ çитмест. Çăралатнă сĕтĕн пысăк пайне Германи çарĕ валли памалла.

Франци халăхĕ гитлерла оккупантсене хирĕç тăрать

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Францирен килекен хыпарсем Франци халăхĕ Германи оккупанчĕсене тата вĕсен Виши правительствинчи лакейĕсене ытларах та ытларах хирĕç тăни çинчен калаççĕ: «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Виширен пĕлтернĕ тăрăх, халăх продовольствие Германие илсе кайма мĕнпур майсемпе чарать. Оккупациллĕ влаçсем тата Виши правительствин агенчĕсем ялсемпе хуласенче продовольствие массăллăн турта-турта илеççĕ. Анчах та нимĕçсем çав продовольствие час-часах Германие илсе каяймаççĕ, мĕншĕн тесен халăх ăна пĕтерсе хурать. Туртса илнĕ, вырман тырăсене, çапман капансене тата туртса илнĕ тырăн склачĕсене вут тĕртсе çунтарнисем нумай пулнă.

Лавальпе нимĕç оккупанчĕсен Германие 350 пин рабочи тупса ямалли планне тултарма хăтланнине те çавăн пекех хаяррăн хирĕç тăраççĕ. Октябрĕн 5-мĕшĕнче Лионра рабочисене Германи предприятийĕсенче ĕçлеме пухакан гитлерла бюро çуртне сирпĕнтерсе янă. Çав çурт пĕтĕмпех ишĕлнĕ. Францири мĕнпур хуласенчи предприятисенче рабочисем хумханаççĕ. Рено заводĕнчи рабочисем французсене ирĕксĕрлесе Германие янине хирĕç протестлесе забастовка тунă пулнă, çав забастовкăна оккупациллĕ влаçсем заводра ĕçлекен 50 рабочие заложник шучĕпе тытса хупсан çеç пусарса лартнă.

Пиншер француз, Эрриона пăхса, хăйсен хисеплĕ легион орденĕсене Виши влаçĕсене тавăрса параççĕ. Патриотсем хăйсемшĕн çав легион орденĕсене çакса çÿреме намăс тесе шутлаççĕ, мĕншĕн тесен Виши правительстви çав орденпа Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра гитлеровецсем патĕнче ĕçлесе тăракан темиçе француз офицерне наградăланă.

Гитлеровецсем Осло халăхне хаяррăн тавăраççĕ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 25-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Ослона тапăннă чухне Осло халăхĕ сывлăшран тапăнассинчен хÿтĕленес тĕлĕшпе кăларнă правилăсене юри пăснă. Нумай норвежецсем союзниксене уççăнах кăмăлланă. Çакна пула Ослори гитлерла влаçсем çĕнĕ репрессиллĕ мерăсем йышăннă. Нумай норвежеца, оккупациллĕ влаçсемпе квислинговецсем «Англи авиацийĕ тапăннăшăн шухăш-кăмăл енчен ответлă пулса тăраççĕ» тесе шутлакансене, хăйсен хваттерĕсенчен кăларса янă. Оккупациленĕ хваттерсенче пурăннă çынсене хăйсемпе пĕрле япаласем илсе кайма чарнă. Çав хваттерсене квислинговецсемпе нимĕçсен чиновникĕсене вырăнаçтарнă. Çынсене йышлăн арестленĕ.

Англи авиацийĕ Оснабрюка тапăнни

ЛОНДОН, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пичетлесе кăларнă коммюникере çапла каланă: октябрĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк вăйĕсем промышленность тĕлĕшпе тата чугунçулсем тĕлĕшпе те паллă центр пулса тăракан Оснабрюк çине вăйлăн тапăннă. Англичансен 6 самолечĕ хăйсен базисене тавăрăнман.

Америка бомбардировщикĕсем Наварино портĕнче тăракан тăшман суднисене тапăнни

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем октябрĕн 5-мĕшĕнче Кăнтăр-Хĕвеланăç Грецири Наварино портне тапăннă. Тăшман транспорчĕн икĕ пысăк судни çине бомбăсем тĕл ÿкнине палăртнă, çав суднăсем синче взрывсем пулнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

УПРАВЛЕНИЕ АВТОТРАНСПОРТА ПРИ СНК ЧУВАШСКОЙ АССР
объявляет набор учащихся на дневные и вечерние курсы шоферов и автослесарей в г. г. Канаше и Чебоксарах. Срок обучения на курсах шоферов с отрывом от производства 45 дней, а без отрыва от производства—3 месяца.

На курсы шоферов принимаются мужчины и женщины в возрасте не моложе 17 лет и 6 месяцев, а на курсы автослесарей от 14 лет и старше, имеющие образование не ниже 4 классов.

Зачисленные на курсы шоферов с отрывом от производства обеспечиваются стипендией от 80 руб. до 120 руб. а иногородние, кроме того, квартирными—30 руб. в месяц.

Заявление с заверенными копиями документов об образовании, рождении, автобиографией, с 4-мя фотокарточками и почтовыми марками на 60 коп. направлять: желающим обучаться в г. Чебоксарах в Управление автотранспорта: ул. Союзная, дом № 4, а в гор. Канаше—в Канашскую автошколу.

УПРАВЛЕНИЕ АВТОТРАНСПОРТА ПРИ СНК ЧАССР

2—2

Дирекция, парторганизация и завком Чебоксарского ликеро-водочного завода с прискорбием извещают о преждевременной смерти

тов. КУЗЬМИНА Ивана Кузьмича,

начальника охраны завода, и выражают соболезнование семье покойного.

Разыскиваем двух лошадей:

1) кобылу сивую и 2) мерина темно-гнедой масти. Обе лошади небольшого роста. Пропали из деревни Атрать, Алатырского района.

Знающих местонахождение их просим сообщить за вознаграждение по адресу: п/о Вурнары, Вурнарского района, Обозоремонтная мастерская.

2—2

ПРОПАЛ ЖЕРЕБЕЦ, гнедой масти, грива налево, рост ниже среднего, шести лет. Знающих о местонахождении лошади просим сообщить: с. Сундырь, Сундырского района, конторе Заготскот, письменно или по телефону.

СУНДЫРСКАЯ КОНТОРА ЗАГОТСКОТ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 950 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 53 84 п. л.